ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

31 (4497) №, 2016, август (çурла), 11

1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă

Хакĕ ирĕклĕ

Индексĕ: 54802

ХАСТАР

## Çут çанталăк илемĕ тыткăнлать ăна



**Тем тесен те, ял хăйĕн илемĕпе çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те чуна тыткăнлать. Çулла пушшех те. Çавăнпа та чылай ача каникула ялтах ирттерет. Килте кăмăл туличчен ĕçлеме, ун хыççăн канма, шыва кĕме аван.**

– Эпĕ те çут çанталăксăр пурăнаймастăп, çавăнпа ял, тăван тăрăхăм çав тери çывăх мана, – тет Дарья Григорьева. – Каникулта та таçта та çитрĕмĕр. Вăрманта пулса кăмпа-çырла пуçтартăмăр, милĕк хатĕрлерĕмĕр. Тата аннен тутлă çимĕçĕсене çисе савăнтăмăр. Пĕлетĕр-и, унăн кукăлĕсемпе икерчисене, хуплу таврашне çисе тăранма çук. Тепĕр чухне хам та чустапа аппаланма юрататăп. Ара, аннене пулăшас килет-çке. Кукăль ăшне хумалли е икерчĕ çине сĕрмелли хутăш хатĕрлеме те кăмăллатăп. Эх, техĕмлĕскерсене çемьепе сĕтел хушшинче астивме мĕн тери кăмăллă! Пирĕн пата килнĕ хăна та савăнать. Анне çăкăрне те кăмăллатпăр. Питĕ тутлă, ырă шăршăллă унăн çăкăрĕсем. Лавккаринчен те техĕмлĕрех. Пичче те, шăллăм та анне янтăланă апат-çимĕçе юратса çиетпĕр.

Кăçалхи каникул Дашăшăн тухăçлă иртрĕ темелле. Чылай кĕнеке вуларĕ вăл, шăллĕне те тĕрлĕ тĕслĕ «Тетте» журналпа паллаштарчĕ. Пĕчĕкскер ниçта кайса кĕрейми хĕпĕртерĕ, савăннипе алă çупрĕ.

Унччен ир пуçласа каçчен уйрăлайман, халĕ çӳлĕк çинче вырăн тупнă пуканийĕсем валли кĕпесем çыхрĕ. Килте усă курма е парнелĕх пултăр тесе тĕрлĕ салфетка та хатĕрлерĕ.

– Кирек епле çынна та унăн ăсталăхĕпе пултарулăхне тата ĕçре е вĕренӳре тăвакан çитĕнĕвне кура хаклаççĕ-çке. Ачаранах ĕçе хăнăхни – усăллă япала. Ӳссен хамăрах кирлĕ-çке вăл. Ĕнтĕ вĕрентекенсемшĕн тунсăхларăм та. Учитель... Иккĕмĕш анне. Тăван çĕршыва, пурнăçа юратма вĕрентет. Вăл пулман-тăк эпир вулама, çырма, шутлама пултарайăттăмăрши? Кам пире пурнăçра тĕрĕс çул тупма, ырăпа усала уйăрма пулăшать? Паллах, учитель! Кашни ача çак сăмаха мăнаçлăн та мухтанса калама тивĕç. Çăмăл мар вĕрентекенсен ĕçĕ, çавăнпа вĕсене тав тăвас килет, – тет йăл кулăллă Даша.

Ӳссен вара хĕрача воспитатель пуласшăн.

– Ачасене юратнăран çак профессие суйласшăн. Çитменнине пĕчĕк шăллăма Аркаша кашни кун пăхнă, халĕ те манран шит те уйрăлаймасть. Эпĕ ăçта – вăл унта. Тата тем те пĕлессишĕн çунать. Кунне унăн вун-вун ыйтăвне вăйă урлă кăтартса пама тăрăшатăп, – тет.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***

Канаш районĕ,
Ăвăспӳрт Кипеч.

**Хаклă вулакансем! 2017 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн *çурла уйăхĕн 31-мĕшĕччен* йӳнĕ хакпа "ХЫПАРА" – 664,74 тенкĕпе, "ХЫПАР-эрнекуна" 319,92 тенкĕпе, "ТАНТĂША" – 255,24 тенкĕпе, "ТЕТТЕНЕ" – 145,20 тенкĕпе, "САМАНТА" 182,94 тенкĕпе кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ**

# «Çын тăвайман ĕç çук»



Çын мĕн чухлĕ ытларах чĕлхе пĕлет, вăл çавăн чухлĕ ăслăрах, ирĕклĕрех. Тĕнчери тĕрлĕ çĕршыва курса çӳреме çунат хушăнать тейĕн. Катя Соловьева та мĕн пĕчĕкрен ют çĕршывсене çитсе курма ĕмĕтленет. Акăлчан чĕлхине пит килĕштернĕрен хушма уроксене те çӳренĕ вăл. Интернетри ятарлă сайтсенче ют çĕршыв çыннисемпе час-часах çыру çӳретет, çапла майпа чĕлхине якатать, ĕмĕтне çывăхлатать. Тăтăшах акăлчанла кинофильм курать вăл, килте йăмăкĕсемпе те çак чĕлхепе пуплет. Катя куçаруçă пулма тĕллев лартнă. Шкултан лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнăскере çак енĕпе йывăрах пулмĕ. Акăлчанла кăна мар, итальянла та, китайла та вĕренесшĕн çунать-çке вăл.

Тăван чĕлхене лайăх пĕлсен кăна ют чĕлхене вĕренме çăмăл теççĕçке. Катьăна ку пĕрре те хăратмасть, мĕншĕн тесен чăваш чĕлхипе тата литературипе унăн пĕлĕвĕ çирĕп, çак предметсемпе район олимпиадисенче те палăрнă.

– Мана Людмила Сачковăн «Чĕкеçĕм, чĕкеç» хайлавĕ килĕшет. Унта чăваш халăхĕн пурнăçĕ сăнланни сисĕнет, предложенисем те хитре йĕркеленнĕ. Вулама пуçласанах хайлав чуна тыткăнларĕ. Пирĕн çапла илемлĕ çыракансем пурри савăнтарать, – чунне уçать чăвашлипе кăна мар, вырăс тата ют çĕршыв литературипе те кăсăкланаканскер.

Катя спортпа та туслă: чупма юратать, волейболла вылять, армспорт ăмăртăвĕсене хутшăнать, çавăн пекех спорт туризмĕпе кăсăкланать. Килти ĕçрен пăрăнманни, йывăрлăхран хăраманни ăна ăмăртусенче çĕнтерме пулăшнă туйăнать имĕш.

Маттур хĕрачан чун иленĕçĕ – вĕтĕ шăрçапа тĕрлесси. Çак енĕпе республикăра «Чĕрĕлĕх хунавĕсем» конкурса хутшăнса çĕнтерӳçĕ пулса тăнă вăл.

Хастарскере ахальтен мар кăçал районта «Мисс шкул ачи – 2016» ятпа чыслană. Çакна вăл чăнахах та тивĕç.

– Нихăçан та пуçа ан усăр, тĕллев лартăр та ăна пурнăçлама тăрăшăр. Хăвăр вăя шанăр, ĕçлĕр, вара сирĕн ĕмĕт пурнăçланатех. Мĕншĕн тесен çын тăвайман ĕç çук, – тет Катя «Тантăш» вулаканĕсене.

*Лариса ПЕТРОВА.*

Комсомольски районĕ,
Комсомольски 2-мĕш шкулĕ.

ЫРКĂМĂЛЛĂХ

# Спонсорсене тав тăваççĕ

**«Ырă ĕçĕн çимĕçĕ те ырă», – тенĕ ваттисем мĕн авалтан. Мĕн чухлĕ çынна пулăшатăн, çавăн чухлех вăл каялла ырăпа сан патах таврăнать.**

Комсомольски районĕнчи Урмаел вăтам шкулĕ кăçал хăйĕн юбилейне паллă тăвать. Çак паллă куна вĕренекенсем çитĕнӳсемпе кĕтсе илесшĕн. Ку енĕпе кунта лайăххи ытларах та. Ачасем каникулта та шкулшăн нумай тăрăшрĕç, вĕренӳре те лайăх кăтартусемпе савăнтарас тĕллевлĕ.

Кунта вĕреннĕ, халĕ тĕрлĕ çĕрте тăрăшакансем хăйсен тăван шкулне самантлăха та манманни педагогсене питех те савăнтарать. Шкултан 1969 çулта вĕренсе тухнă, халь «Газпром межрегионгаз Чебоксары» ООО тата «Газпром газораспределение Чебоксары» АО генеральнăй директорĕнче ĕçлекен, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Киямётдин Садыртдинович Мифтахутдинов Урмаелсене пулăшма яланах хатĕр. Нумаях пулмасть вăл шкула 150 пин тенкĕ укçа куçарса парне турĕ.

Тăван ялтах пурăнакан Ильшат Заитович Адиев уйрăм предприниматель те шкул музейне çĕнетсе пулăшма май туса панишĕн педагогсем тем пекех савăнчĕç.

Çирĕм сакăр çул каялла шкултан вĕренсе тухнă Зуфар Минназимович Шакуров уйрăм предприниматель сĕтел-пукан туянса пама пултарчĕ.

Ырă ĕçсем асăрханмасăр юлмаççĕ. Шкул коллективĕ те, ачасем те аслисене тав туса чĕререн ăшă сăмах калаççĕ.

# Спектакль хыççăн спектакль

**Ача-пăча театр студине çӳрекен çамрăк артистсемшĕн каникул канмалли кăна мар, хĕрӳ вăхăт та.**



Патăрьел халăх театрĕ çумĕнче иртнĕ çул йĕркеленнĕ «Шалунишки» студире 12 ача театр ăсталăхĕн пуçламăш никĕсĕсене алла илет. Луиза Леонтьева режиссерпа Ирина Егорова художник-постановщик ертсе пынипе сцена çинче калаçма хăнăхаççĕ, утма, ташлама, хăйсене тытма вĕренеççĕ.

Тĕрлĕ спектакле хутшăнма, репертуара çĕнетсех пыма тăрăшать коллектив. Халь вĕсем Ева Лисинан «Бомжик» тата «Витаминная страна» юмахĕсемпе çине тăрсах ĕçлеççĕ.

Çак кунсенче театр студийĕн артисчĕсем Шарль Перро çырнă «Золушка» юмаха хатĕрлеме тытăнчĕç.

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** студи çĕнĕ юмахпа паллашать.

Патăрьел районĕ,
Патăрьел.

*Хыпарсене Владимир ФЕДОРОВ пухса хатĕрленĕ.*

ХАТĔР-И ШКУЛ?

# Çав куна чăтăмсăр кĕтеççĕ

***Вăхăт шав малалла шăвать. Ачасем тин çеç çуллахи каникула кайрĕç темелле. Ак, кĕçех çĕнĕ вĕренӳ çулĕ те пуçланĕ. Хаваслă, йăл кулăллă арçын ачасемпе хĕрачасем каллех парта хушшине ларĕç. Пĕлӳ «карапĕ» нумай-нумай вĕренĕвĕн çĕнĕ «утравĕ» çине илсе çитерĕ. Ачасем хальччен пĕлменнине хаваспах «шĕкĕлчĕç». Тĕпчемелли, кăсăкли умра вара темĕн чухлех пулĕ. Вĕрентекенсем пулăшнипе нумай çĕннине алла илĕç.***

Паян вара шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнине тĕрĕслеççĕ. Юсав валли республика бюджечĕнчен 346 миллион тенкĕ укçа уйăрнă. Хатĕрленӳ ĕçĕсем палăртнă пекех пулса пыраççĕ. Утмăл тăватă шкулта хутса ăшăтмалли системăсене вырнаçтарассине тимлĕх уйăрнă. Ачасем спорт занятийĕсене хăтлă залсенче ирттерни пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа та çирĕм сакăр ял шкулĕсен спорт залĕсене вĕренӳ çулĕ пуçланиччен юсаса çĕнетесшĕн тăрăшаççĕ.

Шăмăршă районĕнчи Пăчăрлă Пашьел, Çĕмĕрлери 2-мĕш, Вăрмарти Г.С.Егоров ячĕллĕ, Улатăр районĕнчи Восходри тата Улатăрти Совет Союзĕн Геройĕ З.И.Парфенова ячĕллĕ вăтам шкулсенче тĕплĕ юсав пырать.

Комсомольски районĕнчи Элпуç шкулне çӳрекенсем вара çак савăнăçлă куна нихçанхинчен те тӳсĕмсĕр кĕтни куçкĕрет. Кунта кăçал çĕнĕ хăтлă пĕлӳ çурчĕ 165 вĕренекене тата шкул çулне çитмен 40 ачана хаваспах йышăнĕ.

Пур шкул та вĕренекенсене чăтăмсăррăн кĕтет. Юратнă вĕрентекенĕсемсĕр, тус-юлташĕсемсĕр тунсăхланă ача-пăча та пĕлӳ тĕнчине çул тытма хатĕрленет те ĕнтĕ.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 – (çур çула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 64-24-01

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 28-83-70
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1162 экз.

● ЗАКАЗ
№ 2781
Пичете çурла уйăхĕн 10-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

ЧР ПУÇЛĂХĔН СТИПЕНДИАЧĔ

# Туртăм пулсан...



Дима Сергеев – питĕ хастар ача. Район тата республика шайĕнчи «Зарницăпа» «Орленок» вăййисенче кашни çулах палăрнă вăл. Иртнĕ çул района ишессипе виççĕмĕш вырăна тухнă. Тăрăшулăх, туртăм пулсан темĕнле çĕнĕлĕхе те парăнтарса çак енĕпе çитĕнӳ тума пулать çав. Çакă кăсăклă, Дима малтан шывра ишме пачах та пĕлмен. Вун икĕ çулта чухне Патăрьелти «Паттăр» физкультурăпа спорт комплексĕнче юлташĕсем ишме вĕрентнĕ те тепĕр çулхинех арçын ача ăмăртусене хутшăнса лайăх кăтартупа савăнтарнă. Çакă пире пурне те хамăр вăя яланах шанма хистет мар-и?

Тинĕс троеборийне хутшăнса вăл командăпа пĕрремĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Тĕрлĕрен ăмăртура мала тухса пĕрлехи çĕнтерĕве çывăхлатнă. Çамрăк пушарнăйисен ăмăртăвĕсенче те сахал мар Хисеп хутне тивĕçнĕ.

Дима çул-йĕр правилисене аван пĕлет, çак енĕпе иртекен конкурссенче тăтăш çĕнтерет.

– Атте маншăн тĕслĕх вырăнĕнче, – тет Патăрьел районĕнчи Патăрьелти 2-мĕш шкултан ăнăçлă вĕренсе тухнăскер. – Вăл Шалти ĕçсен министерствин ветеранĕ. Чĕмпĕрти Гражданла авиаци училищине вĕренме кĕрес шухăш та пурччĕ. Пĕчĕк чухне асатте самолет çинчен çырнă кĕнекесем парнелетчĕ, çак темăпа журналсем пуçтараттăм, çавăнпа кăсăклану çуралчĕ те. Анчах эпĕ урăх çулпа каяс терĕм. Компьютер технологийĕсемпе кăсăкланнăран И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн информатикăпа шутлав техникин факультетне вĕренме кĕтĕм. Аслă пĕлӳ илсен ялах таврăнăп, çуралнă еншĕн усăллă пуласчĕ.

Туслă çемьере çитĕнни Димăна пурнăçăн ырă енĕсене ытларах асăрхама май парать. Йăмăкĕшĕн те явапллă тытать вăл хăйне, сывлăх енчен хавшакрах Настьăна пур чухне те пулăшма тăрăшать.

Дима – ЧР Пуçлăхĕн стипендиачĕ. Çакна пурте тивĕçеймеççĕ-çке. Апла пулин те арçын ачан пуç каçăртас, хăйне ыттисенчен мала хурас йăла çук. Сăпайлăскер пуринпе те кăмăллăн калаçма пĕлет. Çавăнпах ăна юлташĕсем те, ял çыннисем те хисеплеççĕ.

*Лариса ПЕТРОВА.*

## ĂШĂ САЛАМСЕМ

СМС саламсене пĕлтермелли номер: 89051975911



Хамăрăн ытарайми юратнă мăнукăмăра – Шупашкарта пурăнакан **Настенька НЯГИНĂНА** – тăватă çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр.

Хаклă Настюша! Сывлăхлă та телейлĕ, аслă хĕрача пул! Пире хăвăн çитĕнĕвӳсемпе яланах савăнтар. Эпир сана питĕ юрататпăр!

***Салампа кукашшĕ ВАСИЛИЙ тата кукамăшĕ ЛЮДМИЛА.***

КОНКУРС ТĂСĂМĔ

# Асаттеçĕм, асатте

*Шупашкарти Н.В.Никольский ячĕллĕ професси колледжĕпе «Тантăш» хаçат редакцийĕ йĕркеленĕ «Рабочи профессийĕ ялан хисепре» конкурса тĕрлĕ районтан çырусем килеççĕ. Сăнӳкерчĕксем, презентацисем, прозăлла хайлавсем яраççĕ вулакансем. "Ял хуçалăхĕнче, завод-фабрикăсенче ĕçлекенсем çинчен конкурс ирттерсе пысăк ĕç тăватăр. Тавах уншăн. Пире, ялти шкул учителĕсене, конкурс кĕске вăхăтра иртни пăшăрхантарать. Ялта ку хушăра – хĕрӳ вăхăт: çĕр ĕçĕсем. Конкурса тепрер уйăх та пулин тăсасчĕ", – тесе çырать Йĕпреç районĕнчи Буинск поселокĕнче химипе биологи вĕрентекен Л.А.Николаева. Конкурс модераторĕсем ăмăртăва тăсма шутларĕç. Эппин, тусăмăрсем, сирĕнтен конкурс материалĕсене кĕтетпĕр. Халĕ ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ, Шăмăршă районĕнчи Палтиел вăтам шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен З.И.Свеклова вĕренекенне Тоня Тяпушовăна сăмах парар. Вăл конкурса эссе ярса пачĕ.*

***Конкурс координаторĕ Анатолий АБРАМОВ.***

Мĕн тери телей асатте пурри! Ун сăмахĕ – ахах, кăмăлĕ – хĕвел, алли ылтăн. Пушă вăхăтра ун патне васкатăп, пĕр чарăнми пуплетĕп, пулăшма тăрăшатăп. Юрать, пĕр ялтах пурăнатпăр. Ăна курмасăр епле чăтăн?

Асатте, Анатолий Иванович Тяпушов, Анат Чаткас çынни. Ял-йышра ятлă-сумлă.

Çак кунсенче ун патĕнче пултăм.

**– Асатте, сан пата хăçан килен – çурту яланах тирпейлĕ.**

– Мăнукăм, мĕн тăвас тен. Хамăнах тирпейлĕхе тытмалла.

Асатте хăйĕн пурнăçĕ çинчен каласа пачĕ.

– Эпир çемьере тăватă ача ӳсрĕмĕр. Оля, Елисса, Зоя тата эпĕ. Туслă пурăннă. Ачалăхăм Тăван çĕршыв вăрçи çулĕсене лекнĕрен пурăнма йывар пулнă. Аннене яланах пулăшма тăрăшнă. Атте вăрçăра вилнĕ.

– Аттесĕр ӳсме, чăн та, çăмăл пулмарĕ, – калаçăва малалла тăсрĕ асатте. – Анне мана каласа панă тăрăх, вăл аттен ĕç инструменчĕсене усранă, "Ман ывăл ӳсет, унăн та ĕçе вĕренмелле," – тенĕ.

**– Эсĕ чӳрече рамисене нумай тăватăн. Çак ăсталăха сана кам вĕрентнĕ, асатте?**

– Эпĕ малтан çынсем тунине сăнаттăм тата мана кӳршĕри Захар çак ĕçе хăнăхтарнă. Майĕпен вĕренсе пынă та. Миçе рама тунине шутласа та пĕтереймĕн.

Эпĕ астăватăп-ха, ун патне Чаткас халăхĕ кăна мар, ытти ялсенчен те пулăшу ыйтса килетчĕç.

– Ялти шкултан çичĕ класс вĕренсе тухнă хыççăн колхозра комбайнер пулса ĕçлерĕм. 19 çула çитсен салтака кайрăм.

Салтакран килсен асатте Канашра механизатора вĕренсе тухнă. Кайран колхозра ĕçленĕ.

**– Мĕншĕн механизатора вĕреннĕ? – ыйтрăм унран.**

– Çав вăхăтра комбайнерсем кирлĕччĕ. Механизатор профессийĕ сумлă пулнă. Комбайнпа миçе пин центнер тырă çапнине шутласа та пĕтереймĕн. «Хир карапĕн» штурвалĕ умĕнче пĕтĕмпе 43 çул пулнă. Хĕлле вара сысна ферминче кочегарта тăрăшнă. Хĕллехи вăрăм каçсенче йĕке те ăсталанă, кăçатă та тĕпленĕ.

Асатте колхозра пĕрле ĕçленĕ çынсемпе туслă пулнине те пĕлтĕм. Çавăн пекех ăна тĕрлĕ наградăпа хавхалантарнă, «Ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ята та тивĕçнĕ вăл.

«Лаша пуласси тихаран паллă», – тенĕ ватăсем. Çак сăмахсем асатте пирки калаçнăнах туйăнаççĕ.

Хисеп хучĕсен хушшинче 1982 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче тухнă «Коммунизм ялавĕ» хаçат куç тĕлне лекрĕ. Ăна алла тытсан малтанхи страницăра асаттен сăнӳкерчĕкне курах кайрăм. «Шăмăршă районĕнче «Восход» колхозри А.И.Тяпушов комбайнера районта ырăпа асăнаççĕ. Çулсерен вăл ултă-çичĕ пин центнер тырă çапса илет. Кăçал та пысăк ӳсĕм тунă...» – тесе çырнă сăнӳкерчĕк айне. Ман шухăшпа, Мухтав хучĕсем тата грамотăсем ахаль хут çеç мар, вĕсем çын хăйĕн ĕçне чун-чĕререн тăрăшса тунине çирĕплетеççĕ.

– Эпир санăн асаннӳпе, Ольга Дмитриевнăпа, – сăмаха малалла тăсрĕ асатте, – Çултаlăк туслă пулнă, 1962 çулта вара туй кĕрленĕ. Пĕрлехи вăйпа çурт лартнă. Туслă пурăннă. Ачасене пĕчĕкрен тирпейлĕхе, ĕçе хăнăхтарнă. Пилĕк ача çуратса ӳстертĕмĕр.

Асли – Михаил. Вăл Шупашкарта хăйĕн çемйипе пурăнать. Тăван киле мăшăрĕпе, икĕ мăнукпа – Ольгăпа, Ксюшăпа килме тăрăшать.

Иккĕмĕшĕ – Людмила Патăрьел районĕнчи Чăваш Сăкăт ялĕнче мăшăрĕпе пурăнать. Вĕсем те килти ĕçсенчен пушансанах çуралса ӳснĕ килне çитме тăрăшаççĕ.

Александра хĕрĕм Анат Чаткасри ача садĕнче воспитательницăра ĕçлет.

Тепĕр ывăлĕ – Валерий, манăн атте. Пирĕн çемьере висĕ хĕр.

Аттен йăмăкĕ, Светлана, Шăмăршă районĕнче вăрлăх пахалăхне тĕрĕслекен станцире вăй хурать. Вăл мăшăрĕпе Энтриел ялĕнче пурăнать.

Асатте тарăннăн сывласа илчĕ те сăмаха малалла тăсрĕ:

– Асаннӳпе пĕрле 36 çул пурăнтăмăр. Йывăрри те, çăмăлли те пулнă пурнăçра. Пĕр-пĕрне яланах ал панă.

– Асатте, эсĕ манăн аттене комбайнпа ĕçлеме хăçан вĕрентнĕ?

– Аçуна 15 çулта чухнех хама пулăшма тырă вырма илсе çӳреттĕм. Пĕчĕккĕн механизатор ăсталăхне алла илчĕ. Комбайн пайĕсене пилĕк пӳрнене пĕлнĕ пек пĕлетчĕ. Манран кая мар комбайна çӳретме вĕренсе çитрĕ. Ку маншăн – телей!

Манăн 12 мăнук тата 6 кĕçĕн мăнук вĕт! Шел, асаннӳ çак савăнăçа кураймарĕ.

...Нумайччен пычĕ пирĕн калаçу. Чĕрере мăнаçлăх туйăмĕ çуралчĕ. Мĕн тери ырă, аслă, ĕçчен манăн асатте! Унра çамрăклăхри хастарлăх упранать. Хаклă çыннăма çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр суннă май çапла калас килет: «Асатте! Юратнă асаттеçĕм! Санăн ырă ятна, чысна нихăçан та варалас марччĕ!»

***Тоня ТЯПУШОВА.***

Шăмăршă районĕ, Палтиел.

# Чăваш ачине чăвашла мультфильм КИРЛĔ!



**Çурла уйăхĕн виççĕмĕшĕнче ЧР Наци вулавăшĕн «Кĕмĕл ĕмĕр» галерейинче Чăваш ӳнерçисен союзĕн тата Раççей журналисчĕсен союзĕн членĕн Владимир Галошевăн «Пултарулăх енĕсем» куравĕ уçăлчĕ.**

*ПĔЛСЕ ТĂМА. Владимир Петрович 1968 çулхи пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнче Елчĕк районĕнчи Кушкă ялĕнче çуралнă. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ. Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимеш культура керменĕнче ĕçленĕ. Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн 1-мĕш çăм арлакан фабрикинче оформитель-ӳнерçĕ пулнă. «Тантăш» хаçат корреспонденчĕ те, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче фотограф та, И.Н.Ульянов тата И.Я.Яковлев ячĕллĕ музей ертӳçи те пулнă. 2004 çулта И.Я.Яковлевăн тĕпчевпе ăслăлăх институтĕнче ĕçленĕ май «Чăваш халăхĕн вĕренӳ тытăмĕ йĕркеленни» кĕнеке кăларнă çĕре хутшăннă. 2007-2012 çулсенче Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Аппаратĕнче ĕçленĕ.*



Куравра тĕрлĕрен жанрлă ӳкерчĕксем кăтартнă: мифологи, портрет, карикатура, шарж, йывăçран касkаласа тунă япаласем…

– Тĕпрен илсен манăн тематика – чăваш юмахĕсем, халапĕсем, легендисем, – каласа парать Владимир Петрович. – Курава çак кĕнекесем те кĕчĕç: «Чăваш тĕнчи» /«Чувашский мир»/, «Çăлтăр çӳлте тӳпере» /«Моя звезда на небе»/, «Мир наших предков», И.М.Трофимовпа пĕрле кăларнă «Батальон моей Родины».

Владимир Галошев хатĕрленĕ «Чăваш тĕнчи» анимаци фильмне халĕ Чăваш Наци телевиденийĕпе тăтăшах кăтартаççĕ. Вăл пĕлтĕр «Асам» кинофестивальте приза тивĕçнĕ. «Чăваш тĕнчи» серири 33 фильма Владимир Петрович, компьютер технологине лайăххах алла илнĕ май, çĕнетсе пырать. Фотошоп программипе ĕçлеме ăна хĕрĕ Аня пулăшать. Çак серири виçĕ фильма ашшĕпе хĕрĕ пĕрле илемлетсе лайăхлатнă та кăçал Самарăра «iВолга» кинофестивальте виççĕмĕш вырăн йышăннă, статуэткăна тивĕçнĕ.

– Пире, чăваш халăхне, чи малтанах анимаци фильмĕсем кирлĕ, – палăртать Владимир Галошев. – Мĕншĕн тесен чăвашăн ачаранах чăваш пулса çитĕнмелле. Пĕчĕкскер куçпа курса, хăлхапа илтсе, алăпа тытса пăхать, пурнăçа ăнланса пырать – çапла ăна ачаранах чăваш пулма вĕрентмелле. Çавăнпа пире ырă кăмăллă та йĕркеллĕ çын пулса çитĕнме хăнăхтаракан, тăван чĕлхепе ӳкернĕ мультфильмсем ытларах кирлĕ. Чăваш халăх юмахĕсем ырра, ăса, пархатарлăха вĕрентеççĕ. Хальхи вăхăтри этем вулама юратсах каймасть, çак сăлтавпах мультфильмсем кирлĕ. Ачасем ытларах Голливуд, вырăс фильмĕсене курса ӳсеççĕ. Вĕсем те ырра вĕрентеççĕ-ха, анчах пĕчĕкскерсене чăваш чунĕллĕ ӳстереймеççĕ.

Владимир Петрович анимаци фильмĕ ӳкерес ăсталăха анлăлатсах пырать иккен. Унччен хусканусене кăтартса пама йывăртарах пулнă ăна. Халĕ технологине алла илнĕçем утнине те, ташланине те, кулăс каланине те кăтартма пултарать вăл. Çапах та мĕн пуррипе лăпланса лармасть, пысăкрах та илемлĕрех мультфильмсем тума ĕмĕтленет.

– Вĕсене валли ырă сăнарсем те пур пирĕн, – тет ăста ӳнерçĕ. – Калăпăр, Ашапатман. Вăл нумай пĕлекен, çивĕч ăслă асамçă хĕрарăм. Кукша вара – айванрах сăнар, вырăссен Ухмах Йăванĕ пекки. Унпа пĕрле хĕрача сăнарне аталантарма пулать. Халăхăмăр юмахĕсенче патшана та ухмаха хăварнă хĕрача сăнарĕсем темиçе те пур. Ырă тата илемлех мар сăнарсемпе сюжета аталантарса пырсан питех те кăсăклă фильм калăплама пулать. Эпир те тĕнче шайĕнче лайăх мультфильмсем тума пултармалла.

Владимир Галошев шухăшĕпе, чăвашсен халапĕсенчи усал сăнарсене, халиччен никам та ӳкермен пулсан, халь те ӳкермелле мар. Пурнăçра ахаль те йывăрлăхĕсем темĕн чухлех-çке. Çав сăнарсем, ӳкерсе кăтартсан, пире пурнăçра хамăра усал витĕм кӳме пултараççĕ имĕш. Ийе, Асат, Вупăр йышшисенчен асăрхансан аванрах.

– Ун пеккисене ӳкернисем те пур манăн, халĕ пулсан çав ĕçе тытăнмăттăм, – тет Владимир Петрович. – Халăх хушшинче пулнă вĕсем, нумай каластарнă, анчах ӳкерсе кăтартма кирлĕ мар вĕсене. Пĕр ăсчах ыр-усалсем çинчен çырнă вăхăтра пурнăçĕнче хура йĕр пуçланни çинчен калаччĕ. Çавăнпа асăрханмалла. Ырă сăнарсене тата ытлашши хăратман япаласене кăтартма юрать. Вĕсем пурнăçа ăнланса илме пулăшаççĕ. Хамăн ĕççенче ырра вĕрентме тăрăшатăп. Илтнĕ пуль-ха ĕнтĕ, тухатмăш карчăк хăйĕн ăсталăхне çамрăк çынна вĕрентсе хăвармасăр вилеймест тет. Çавнашкал картина пур манăн: çамрăк хĕр кушака вĕлернĕ те унăн тирĕ çинче ларать, кушакăн пыршипе йăваланнă. Карчăкăн алли хăй чĕрĕллех çĕрме пуçланă, унăн леш тĕнчене ăсанма вăхăт çитнĕ, çавăнпа вăл хăйĕн ăсталăхне çамрăк хĕре вĕрентсе хăварма васкать. Кунта тухатмăш вăйне кăтартасшăн мар эпĕ. Ун пеккисен ăсталăхне вĕренсе юлсан кайран хăвна та çав шăпа кĕтет тесе асăрхаттарасшăн. Халĕ вăл çамрăк-ха: ун илемĕ çине пăхса киленеççĕ, вăл хăватлă пулнинчен тĕлĕнеççĕ, анчах чунĕнче мĕн ларнине пĕлмеççĕ. Вăл, айванскер, хăйпе юнашар пурăнакан çынсене ырă мар тумасăр пурăнаймасть, унсăрăн ăна аслăраххăн ăсталăхне вĕренсе юлни пусмăрлать. Вĕçĕнче çак çамрăк та хитре çынна та хăйĕн вĕрентекенĕн шăпиех кĕтет. Унашкал пулăмсене Вадим Зеланд эзотерик «Трансерфинг реальности» ятлă кĕнекинче «маятник» тесе ăнлантарать.

Çаплах кăсăклă картинăсемпе паллашма пулать Владимир Галошевăн «Пултарулăх енĕсем» куравĕнче. Ӳнерçĕ графика мелĕпе ĕçлеме ытларах кăмăлланине те палăртар. Кунта анимаци валли ӳкернĕ чăваш паттăрĕсен, яш-кĕрĕмĕн тата юмах-халапри ытти сăнарĕсене курса вĕсемпе çывăхрах паллашма пулать. Тата Владимир Галошев режиссерăн хăш-пĕр видеофильмĕн афишисем те кунта вырăн тупнă. Çавăнпа та курав вĕçлениччен пурне те унта çитсе илемлĕ ĕçсемпе киленме сĕнетпĕр.

**Лариса ПЕТРОВА.**

● **АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР**

## Абрикос рулечĕ

**Чуста валли 250 грамм çăнăх, чĕптĕм тăвар, 3 апат кашăкĕ ӳсен-тăран çăвĕ, 150 грамм услам çу кирлĕ.**

**Рулет ăшне хума 150 г. сухари, кило çурăикĕ килограмм абрикос /консервлани те юрать/, çур стакан лимон сĕткенĕ, 150 грамм сахăр, çур чей кашăкĕ корица çăнăхĕ, 150 г. вĕтетнĕ аçтăрхан мăйăрĕ илмелле.**



Çăнăх, тăвар, тип çу, çемçетнĕ услам çу, 100 г. ăшă шыв ярса чуста çăрмалла. Унтан йăва пек çавăрса хумалла та тип çу сĕрмелле, кăшт лартмалла.

Услам çупа вĕтетнĕ сухарие çатмана ярса хĕртмелле. Çуса типĕтнĕ, вăррине кăларнă абрикоса кашнине сакăр пая уйăрмалла та лимон сĕткенĕпе хутăштармалла. Тепĕр савăтра сахăра корицăпа пĕрлештермелле. Çатмана пергамент хучĕпе витмелле е шăратнă çу сĕрмелле.

Чустана сĕтел çине хурса пĕр сантиметр хулăнăш пуличчен якатмалла, тип çу сĕрмелле те сухари сапмалла. Чустана çавăрса рулет тумалла.

Духовкăра /180-200 градус/ ылтăн тĕс çапиччен 30-35 минут тытмалла. Хатĕр рулета çиелтен çу сĕрмелле, 5 минут лартмалла та сахăр çăнăхĕ сапмалла.

Абрикос вырăнне сливăпа та усă курма юрать.




## Çамрăк чăваш çыравçисемпе ӳнерçисен регионсен хушшинчи «Çĕнĕ хум» пултарулăх конкурсĕнче «Лайăх сăвă» номинацире мала тухнă ĕçсем

**1-мĕш вырăн**

### Тăван Чăваш Ен

Сарлака ман çĕршывăм Раççей!
Пур унта манăçми Чăваш Ен!
Çакăнта пурăнни вăл – телей,
Савăк кулă каймасть сăн-питрен!

Юрататăп, çĕршывăм, сана!
Уй-хирсем, вăрмансем, çăлкуçсем
Пурăнма вăй параççĕ мана,
Çавăнпа ялкăшаççĕ куçсем.

Раççейрех пурăнасчĕ ялан
Вĕренсе, ĕçлесе кăмăлтан.
Сан тӳпӳ айĕнче мир пулсан
Пурăнма çав тери-çке аван.

Пит илемлĕ ялсем, хуласем…
Эс – чи савăк çĕршыв тĕнчере.
Чапа тухнă ĕçпе çыннусем.
Çавăнпах пуль юрлать те чĕре.

Раççейри Чăваш Енĕм эс ман,
Чи асамлă та ырă сăпка.
Асран тухмĕ Пашьелĕм нихçан.
Савнă ен, чунăма эс лăпка.

Çак çĕре ман упрасчĕ тасан,
Чечексем тинкерейччĕр куçран,
Чĕрчунсем ирĕкре пуласса
Эп тăратăп, туссемĕр, шанса.

Ĕмĕр пурăн, çĕршывăмçăм ман,
Илемпе илĕртсе эс пире.
Çĕр çинче тăванла пурăнма
Эп чĕнетĕп пурне те сире!



Ксюша КОШЕЛЕВА
(Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) **ӳкерчĕкĕ.**

### Айхи, эс пирĕн чĕрере!

Айхи, эс пирĕн чĕрере.
Ăçта кăна çитсе килмерĕн.
Тĕнче тавра çӳре-çӳре
Чăваш ятне çӳле çĕклерĕн.
Сан йĕркӳсем – чăн пурнăçран.
Вулакансем çакна туяççĕ.
Поэзие юратнăран
Ман туйăмсем те вăранаççĕ.
Нумай чĕлхепеле паян
Эс çырнă сăвăсем янраççĕ.
Тутар, француз е акăлчан
Хăй чĕлхипех сана вулаççĕ.
Тĕнче пĕлет, Айхи, сана!
Чунтан савать Чăваш çĕршывĕ.
Раççей çынни сан талантна
Кампа танлаштарма пултарĕ?!
Санпа ман мухтанас килет,
Пире валли эткер хăвартăн.
Çуралчĕ сăвă, чун сисет…
Эс çăлтăр пек ялан çутатăн.

### Çулсем васкаççĕ систермесĕр

Çулсем васкаççĕ систермесĕр,
Кунсем шăваççĕ малалла.
Иртнисене аса илмесĕр
Çын пурăнмасть те пулмалла.
Геннадий Лисин… Хушамачĕ
Ун халь Айхи, пĕлет кашни.
Çут çăлтăр пек çиçет ун ячĕ.
Чун сăввисем – пире валли.
Шăнкăртатса шыв юхнă евĕр
Ун вуланаççĕ йĕркисем.
Айхи çинчен аса илсессĕн
Ман шухăш та вĕçет инçе.
Хăш чух вара, пĕччен юлсассăн
Вулатăп эпĕ сăвăсем.
Кĕç куç умне тухса тăрассăн
Пекех тата унти сăнсем…
Ан сӳнтĕр сан яту, поэтăм,
Эс тивĕç ĕмĕр пурăнма!
Пире валли хăварнă мулăн
Пĕлесчĕ-ха хакне туйма.

### Манăн палăк

Çынсем вилсен лартаççĕ палăк,
Чечек хураççĕ ун умне.
Ман палăк пултăр çакă сăвă
Сан ятупа, Якку пичче!

Тăван чĕлхе мĕнне туйтартăн
Пире эс – вĕтĕр-шакăра.
Чăн чăвашла калаçтаратăн
Ялта, шкулта та хулара…

Чăваш ятне ярас теместпĕр.
Пирте тапать чăваш чĕри!
«Ухсай пире мĕн калĕ, – тетпĕр, –
Янрамасан чăваш чĕлхи?»

Ухсай тени – сӳнми чăвашлăх.
Чăваш тĕнчи вăл сарлака.
Пирте сӳнмен-ха çут малашлăх,
Кашни туять яваплăха.

**Любовь МЕШКОВА.**
Патăрьел районĕ,
Пăлапуç Пашьел шкулĕ.



Ксюша КОШЕЛЕВА
(Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) **ӳкерчĕкĕ.**

**2-мĕш вырăн**

* * *

Эпир нумай чух чăн çултан аташатпăр,
Эпир нумай чух пурнăçра йăнăшатпăр,
Илемлĕ чечек-ха тесе ал тăсатпăр,
Сисмен те, пиçен чечекне ачашлатпăр.
Анчах та капла юрамасть, ăнланатпăр.
Унтан йăнăша тӳрлетме ăнтăлатпăр.
Ăçта кĕрешӳ – чăнлăха тупатпăр,
Ăна чĕрери çулăмпа туптатпăр.

### Уй-хир

Тăван уй-хир. Тӳпе таса.
Çулла. Пиçет сар тырă.
Шавах хывать ăна савса
Тăри ялан çĕн юрă.
Кас çил вĕрсен чупать ăрша
Ун çиййĕн хумлăн-хумлăн.
Умри пучах тăсать ташша,
Ах пилĕкĕ ун хулăн.
Уй-хир – сăпка. Сикеп унта.
Чун ĕнĕрлет çĕн кĕвĕ.



Кристина ВАСИЛЬЕВА
(Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) **ӳкерчĕкĕ.**

Юрлас килет тата-тата
Чечекленсен çĕршывăм.

### Ан хурлан

Ан хурлан, ан тĕксĕмлен, йăмра,
Пĕчченнишĕн тăлăх катара,
Темех мар, тĕллев пулсан умра
Çăмăл пурăнма, ан пул кăра.

Эс ан вăрç хаяррăн ăш çиле,
Ан кӳрен хĕртсессĕн хĕвеле,
Ан çиллен ларсассăн кайăксем
Туратту çине канма тесе.

Тăрăш çĕнĕ хунавсем яма,
Пĕл çу çумăрне кĕтме, савма,
Пурнăç кĕрешӳ, тĕллев, шанни,
Кирлĕ ялан çунма пĕлни.

**Диана ДУМИЛИНА.**
Патăрьел районĕ,
Патăрьел 1-мĕш шкулĕ.



Оля ГАВРИЛОВА
(Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) **ӳкерчĕкĕ.**

**3-мĕш вырăн**

### Анне пурри – телей

Çак çĕр çинче ырри нумай,
Анне, çавах эс чи хакли –
Ăна пĕлетпĕр ӳснĕ май,
Тата калатпăр: кил ăшши.

Анне пуртан эпир те пур,
Анне хĕвел пек туйăнать.
Анне пуртан эпир маттур,
Анне пур – пурнăç та ăнать.

Анне! Асамлă çак сăмах,
Питех те ăшшăн илтĕнет.
Танлашмĕç ылтăн та ахах,
Аннесĕр пурнăç та сӳнет.

Хăварăп эпĕ палăртса:
Çут тĕнчере нумай ырри.
Калатăп çирĕппĕн, татса:
Сӳнми телей – анне пурри!

### Сăмах вăйĕ

Ырă сăмах çӳле çĕклет,
Кашни çыннах çунат хушать.
Усал сăмах вăл ӳкерет,
Тăраймиех туса хурать.

Чĕлхе вăл шăмăсăр, паллах,
Тăвать ĕçне эс хушсанах.
Кӳренмелле ан пултăрах,
Шутлаттарар пуса кăштах.




Настя ШУРНЕЕВА
(Муркаш районĕ, Юнкă шкулĕ) **ӳкерчĕкĕ.**

### Чăвашла

Анне, юрла-ха эсĕ манпа чăваш юрри,
Атте, ташла, тархасшăн, манпа
чăваш ташши,
Аппа, тĕрлер-и иккĕн хитре чăваш
тĕрри –
Вара пулĕ те пирĕн çирĕп чăваш çемйи.

Тăван чĕлхе çĕклентĕр тесе çӳллĕ шая
Чĕлхене вĕренетпĕр шкулта та тăрăшса.
Ыртеççĕ уявсем те таса чăн-чăвашла,
Ӳсет ача-пăча та чăвашла выляса.

**Диана ИЛЬИНА.**
Канаш районĕ,
Шелттем шкулĕ.

# Володичкинсене халалласа – палăк

***Самар облаçĕнчи Алексеевка поселокĕнчи Прасковья Еремеевна Володичкина тăхăр ывăлне: Сашăна, Андрея, Петьăна, Ваньăна, Васьăна, Мишăна, Костьăна, Федьăна тата Кольăна фронта ăсатнă. Кашнинех киле каялла тĕрĕс-тĕкел çаврăнса çитме пил панă. Анчах вĕсенчен виçĕ тĕпренчĕкне çеç тăван тăрăха тавăрнма шăпа пÿрнĕ, апла пулин те пĕртăвансем вăрçă суранĕсене пула нумай пурăнайман. Куçĕсене ĕмĕрлĕхех хупнă...***



Прасковья Еремеевнăн хурлăхлă шăпи пирки вăрçă хыççăн, 40 çул иртсен çеç, истори вĕрентекенĕ Нина Косаревăна пула чылайăшĕ пĕлнĕ.

– Салтаксен амăшĕ пирки хам та ăнсăртран çеç пĕлтĕм. Тĕлĕнмелле пулин те, Алексеевка поселокĕнче çак çемье пирки никам та унччен илтсех кайман. Эпĕ вара архивсенче тĕрлĕ информаци пуçтартăм. Прасковья Еремеевнăн икĕ кинĕпе мăнукĕсене те шыраса тупма пултартăм. Вĕсем вара паттăрсен амăшĕ пирки тĕплĕн паллаштарчĕç, – тенĕ педагог.

Прасковья Еремеевна пурнăçĕнче чылай хура-шурра курнă. Вăл хăйсен ялĕнчи ĕçчен йĕкĕтпе Павел Васильевичпа çемье çавăрнă. Революцие, вырăх çулĕсене чăтса ирттернĕ. Хăрушă вăрçă вара ăна йăлтах çапса хуçнă.

Володичкинсене кулаксем тесе айăпланă. Ара, вĕсен хуçалăхĕ çирĕп пулнă-çке. Тăхăр ывăлне мĕн пĕр кĕтеселле тĕлленĕ те, ним хускалми ларнă. Çĕр-аннемĕр ылханне тăнланă.

– Ах, самани çав, ахăр самана-çке... – тенĕ вăл куççульленсе. – Ачам, Коленька... Туятăп, сана никам та кĕрешÿрен уйăраяс çук. Шел, хăвна курса ыталасси пулмарĕ... Мĕнех, пехил сана, Коля. Таврăнма çулу çеç кĕске пултăр. Ĕнтĕ ку вăрçă пурне те йăлăхтарса çитерчĕ. Ывăлсене фронта ăсататпăр, хамăр вырăнлă-тулăллă пурăнатпăр, çи-пуç çĕтĕк. Ĕнтĕ мĕн чухлĕ вăйпитти çын пĕтрĕ пулĕ! Пурнăçа юратакан, мал ĕмĕтлĕ çамрăксем вăрçă хирĕнче пĕтни чуна ыраттарать...

Унăн куççулĕсем йăрлатса юхса, хура саппун çакнă чĕрçийĕ çине тумланă та тумланă...

«...Питĕ вăйлă çапăçусем пулчĕç хулара. Ишĕлмесĕр, çунмасăр упранса юлнă çуртсем çукпа пĕрех. Урамсенче çĕмрĕк техника вĕçĕ-ачаран ĕçпе писĕхтернĕ. Çĕр пайĕсене туртса илсен, çемье пуçĕ, Павел Васильевич, чире кайнă. Ураланайман, 1935 çулта вилнĕ. Мăшăрĕ çĕре кĕни хĕрарăма хуçса хăварнă, апла пулин те тÿснĕ, чăтнă. Ывăлĕсемшĕн пурăннă, хуçалăха юхăнтарас мар тесе тăрăшнă.

– Хуняма килĕнче пĕр-пĕринпе тавлашнине нихăçан та асăрхаман. Кирек епле ĕçе те пĕрле пурнăçланă, çавăнпа çемьере туслăх хуçаланнă. Никам та ĕçсĕр аптăраса çÿремен. Кашниех малашнехи пурнăçшăн тăрăшнă, – иртнине аса илсе каланă кинĕ педагога.

Вăрçă пуçлансан Прасковья Еремеевна ывăлĕсене пĕрин хыççăн теприне фронта ăсатнă. Малтан виçĕ аслă ывăлĕ, унтан тепĕр пиллĕкĕшĕ çурăм хыçне кутамкка çакса вут-çулăм алхасăвне кайнă.

– Турăçăм, ывăлăмсем пурте тăван киле таврăнчăрах. Йывăр амансан та, хăрах алăсăр е урасăр пулсан та, таврăнмалла çеç пултăрччĕ. Тĕпренчĕкĕмсем алăкран кĕрсе: «Аннеçĕм, эпĕ çитрĕм», – тенине илтес килет. Ах, чи кĕçĕннине Кольăна, çарта службăра тăраканскере те илсе каяççех фронта, – тенĕ нумай ача амăшĕ пăшăрханса.

Çирĕм виççĕри каччă амăшĕн пилĕпе вăрçа тухса каяйман. Юратнă амăшĕпе сывпуллашма килне таврăнаймасăр, çартан тÿрех нимĕçсемпе çапăçма кайма тивнĕ. Çапах та хăйсен тăрăхĕнчен иртнĕ чухне виçĕ кĕтеслĕ çырăва пуйăс кантăкĕнчен вĕçтерсе ярăватех. Çырăва чукун çул ĕçченĕсем тупаççĕ те салтак амăшĕ патне лекеççĕ. Прасковья Еремеевна унти йĕркесене курсан ĕсĕклесех макăрнă.

– Чăнах, манăн юратнă Коленькăн почеркĕ... Турăçăм, Коленька! – пăшăлтатса илнĕ хĕрарăм. – Епле-ха капла? Сана ахаль те виçĕ çул курман. Халĕ ĕнтĕ çу çулĕпе кайма та пиллеймерĕм.

## Ах, самани, ахăр самана-çке

«Аннеçĕм, анне... Ан хурлан, ан пăшăрхан. Манăн та пиччемсенчен юлма юрамасть, вĕсем пекех ирсĕрсене тĕп тăвăп. Çапăçу хирĕнче паттăрлăхпа палăрасчĕ. Авă, калама çук хаяр та тискер тăшман тапăнса кĕчĕ. Апла пулсан пĕтĕм вăя хурса, вилĕмрен хăрамасăр Тăван çĕршыва хÿтĕлемелле. Аякка пăрăнма, хÿтте пытанма пултараймастăп çакнашкал лару-тăрура, аннеçĕм. Эпĕ, сакăр пиччемпе, тăван тăрăха каялла çитетĕпех! Чĕтăмсăррăн кĕт. Санăн кĕçĕн ывăлу Коля», – тесе шăрçаланă йĕкĕт хăйĕн ăшхыпармăш çырăвĕнче.

Прасковья аппа çыру çине çаплипех куç илми пăхса ларнă, ăна вĕçĕмсĕр аллисемпе сăтăркаланă. Шухăшĕпе вăл таçти инçетри вырăнсене çитнĕ. Тăшмана хăй куçĕпе курнăн, ылханса тарăхнă. Вăл куçĕсемпе хĕррисĕр выртать. Тем чухлĕ танк, грузовик, çăмăл машина. Гитлеровецсем кунтан тухса тарма тытăнсан пирĕн самолетсем килсе тÿпкерĕç ирсĕрсене. Эпир юрăхсăра тухнă техникăсем çине тулли кăмăлпа пăхатпăр. Эппин, нимĕçсен техникине те аркатма, çĕнтерме пулать! Апла пулсан, аннеçĕм, эпир çĕнтеретпĕрех! Çĕнтеретпĕр те – сан пата таврăнатпăрах!» – çакăн евĕр çыру шăрçаланă ывăлĕсенчен пĕри. Тĕпренчĕкĕсен вилнĕ хучĕсем пĕрин хыççăн тепри килме тытăнсан Прасковья Еремеевна вăйран кайнă: «Виççĕшĕ вилнĕ, тепĕр виççĕшĕ хыпарсăр çухалнă... Тепĕр виççĕшĕн шăпи еплерех пулĕ-ши? Ах... Эпĕ кун пек пурнăç пирки тĕлленмен те, урăхларах та ырăрах ĕмĕтсемпе çунатланаттăм», – тенĕ чунтан хурланса.

Кольăран вара хыпар пулман. Вилнĕ çинчен калакан хучĕ килсен амăшĕ пушшех те чире кайнă. Çук, кунашкал хуйха чĕри текех чăтайман унăн. Ывăлĕсене вăрçăран кĕтсе илеймесĕрех çĕре кĕнĕ. Киле вара Константин, Петр тата Иван таврăннă. Йывăр сурансене пула Иванпа Петр нумай пурăнайман. Константин 70 çула çитиччченех пурăннă.

Михаилăн шăпи вара хăйне евĕр пулнă. Вăрçăччен институтра вĕреннĕ вăл. Çав вăхăтрах амăшне йывăррине курса-туйса тата пурнăçа сыпăнтарса пырас тесе каçхине ĕçленĕ. Тăван çĕршыва ирсĕр тăшман тапăнса кĕрсен вăл военкомата çул тытнă. Ăна вара, нимĕç чĕлхине аван пĕлекенскере, малалла вĕренме янă. Хыççăн вăрçа васканă. Шел те, хыпарсăр çухалнă...

Паян поселокра Володичкинсем пирки пурте пĕлеççĕ. Вĕсем пурăннă вырăна кĕске хушăрах çĕнĕ пураран çурт хăпартнă. Прасковья Еремеевнăн мăнукĕ Вера Пехтерева музей йĕркеленĕ. Унта миçе çын пырса паттăрсен çемйипе паллашман-ши?

Пĕррехинче музей умне чаплă машина чарăннă. Алăкĕсем уçăлнă та ватăрах хĕрарăм тухнă. Чи малтанах çурт пурине аллисемпе сĕртĕннĕ, унтан шалалла иртнĕ. Ухватсемпе çăпатасене тытнă та ÿлесех макăрнă. Хăйне аран алла илсе сăмах пуçарнă.

– Атте нимĕç, анне вырăс пулнă манăн. Эпир Раççейрен тахçанах тухса кайнă. Унччен Воронежра пурăннă. Шăпа пире Германие, хыççăн Канадăна илсе çитерчĕ. Унта та тĕпленме май килмерĕ. Бразилие çитрĕмĕр. Качча тухрăм. Тăван тăрăхра пулманни питĕ нумай вăхăт иртрĕ. Пĕлетĕр-и, ку таранччен хама нимĕç тесе шухăшланă эпĕ. Йăнăшнă иккен. Эпĕ чăн-чăн вырăс çынни... Акă çакнашкал йывăç çуртра çуралнă эпĕ, кунти кашни япали хамăн аннене аса илтерет. Вăл пире валли кăмакара апат пĕçернине, сĕтел хушшинче çемьепе пухăннине ăçтан манăçма пултарăп-ха? Прасковья Еремеевна шăпи çав тери хурлантарать, хăрушă вăрçă унăн ывăлĕсене тĕп тунă-çке. Вăрçă вăхăтĕнче халăх мĕнле те пулин çĕнĕ хыпар кĕтнĕ. Хыпарĕ вара – тĕрлĕрен. Фронтран çыру илни – уяртма пуçланă самантра тахçан кĕтнĕ хĕвел йăл çутатса янă пек туйăннă. Кăмăла çĕклентернĕ. Теприсемшĕн, ывăлĕн е мăшăрĕн вилнĕ хутне илсен, хĕвеле сасартăках хупласа хуракан пĕлĕт татăкĕ евĕр, пĕтĕм шанăçне пĕтернĕ... Пĕр сăмахпа каласан, çĕнĕ хыпар вăл çав вăхăтра çăкăртан та хаклăрах шутланнă. Çĕнĕ хыпарсене пулах ял çынни чылай чухне, паян тумалли ĕçне те манса кайнă та кÿрше тухса утнă: «Мĕн калаçаççĕ ял çинче? Паян тата мĕнле хыпар пур-ши? Савăнмалли е хурланмалли?» – тенĕ. Ах, ытла хăрушă вăхăт пулнă-çке вăрçă вăхăтĕнче, – тенĕ хăна куççульне çаплипех ирĕке ярса.

## Музея таçтан та килеççĕ

1995 çулта паттăрсемпе амăшне халалласа поселокра палăк уçнă. Тĕп сăнар – Прасковья Еремеевна. Ун хыçĕнче – ывăлĕсене сăнарласа – тăхăр тăрнас çÿл тÿпенелле вĕçет. Ăна уçнă çĕре пилĕк пине яхăн çын хутшăннă. Çав шутра паттăрсен тăванĕсем те.

– Çак сумлă палăка хăпартма укçа-тенкĕ таçти тăрăхран та пуçтарчĕç. Смоленскран та чылайăшĕ пулăшрĕ. Ара, вăл хулара та вăрçă самаях кĕрленĕ-çке. Çавăнпах пире ăнланчĕç вĕсем, – тенĕ учительница.

Ун чухне палăк патне Прасковья Еремеевнăн кинĕ Евдокия пынă.

– Аннеçĕм, тавах сана... Санпа чухне пурăнма та лайăхчĕ, – тенĕ чĕтренсе тухакан сассипе.

Çак вырăнта Техас фермерĕсем те, Раççейри тăванĕсене шыракан Бразилири миллионерша та, Китайри халăх тата ытти çĕршыв çыннисем те пулса палăк умĕнче пуç тайнă.

– Прасковья Еремеевнăна паллă çар пуçĕсемпех танлаштармалла. Вăл пурнăçри чи хаклă пур ывăлне те хăрушă вăрçа ăсатнă. Анчах фронтран аманса таврăннă тĕпренчĕкĕсене те курма шăпа пÿрмен ăна. Чăнах, хĕрарăм пĕр ачана çухатсан та ĕмĕрлĕхех хуйхăпа пурăнать. Кунта вара... чĕри чăтайман, – тенĕ çынсем хĕрарăма шеллесе.

Тамара Капралова, Михаилăн хĕрĕ, юратнă асламăшне куççульсĕр аса илеймен.

– Эпир, унăн мăнукĕсем, çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнатпăр. Кашни çулах майăн 9-мĕшĕнче Алексеевка поселокне килетпĕр. Асаннепе ывăлĕсене халалланă палăк умне пухăнатпăр, чĕрĕ чечексем хуратпăр, музейра пулатпăр. Эпир ырă кăмăллă асаннене нихăçан та манма пултараймастпăр. Ăна пурнăçра йывăр пулнă, ывăлĕсене вăрçăран кĕтсе илме шăпа пÿрмен-çке-ха, – тенĕ хурлăхлăн.

*Элиза ВАЛАНС хатĕрленĕ.*

# Çынсем патне пурăнма куçнă пăлан



Çак сăнÿкерчĕке Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Мурманск патĕнче тунă. Ун çинче çынсене хăех тупнă, вĕсемпе пурăнма юлнă пăлан сăнланнă. Ку ĕç-пуç вара акă еплерех пулса иртнĕ.

Мурманска хÿтĕленĕ вăхăтра хула çывăхĕнчи вăрмантан пăлан тухнă. Вăл пăшал пенине, çулăма, сирпĕнекен бомбăна пăхмасăрах çынсемпе пĕрле пурăнас тенĕ. Салтаксем çухалса кайман: кăмăлĕ пулсан – тархасшăн! Чĕрчуна Яша тесе чĕнме тытăннă, тăрантарнă, ăна валли лупас ăсталанă. Тревога янăранă вăхăтсенче пăлан кашнинчех салтаксем патне чупнă. Пĕччен юлассинчен ытла нимĕн те хăратман ăна. Çак сăнÿкерчĕке вара пĕр бомбежка вăхăтĕнче тунă.

1944 çулта çапăçусем вĕçленсен салтаксем пăланпа мĕн тумаллине пĕлмен. Шухăшланă-шухăшланă та Яшăна грузовикпе тундрăна шаларах ăсатса янă, вăл унта ытти пăлансене тĕл пуласса шаннă. Анчах Яша мĕн пулса иртнине ниепле те ăнланайман. Грузовик хыççăн вăл вăй çитнĕ таран чупнă…

# Почтальона тапăнакан хурчка

Çут çанталăк йĕркине пăхăнса çунатлă тискер кайăксен эткеме тапăнмалла мар пек, анчах хирĕçле тĕслĕхсем те пулаççĕ. Свенсон канюкĕ çав тери усал кайăк та мар, пурпĕрех çке Канадăри Альберт провинцийĕн Калгари хулинчи почтальонсем лăпкă пурăнаймаççĕ. Çак кайăк почта валеçекене килрен-киле йĕрлесе пырать. Юлашки вăхăтра канюксем пушшех те пуçтахланса çитнĕ. Хулари почта службин ĕçченĕ Рик Тобин «The Calgary Herald» хаçата панă интервьюран: «Почта валеçнĕ чухне тискер кайăксенчен хăтăлас тесе теннис ракеткипе çÿреме тивет. Эпĕ ракеткăпа кайăка çапса хÿтĕленнĕ чухне вăл чĕрнисене кăларса ĕлкĕреймест. Ыттисем те манран тĕслĕх илме тытăнчĕç.

Çак кайăк мĕншĕн шăпах почтальонсене тапăнать-ши? Вăл вĕсене хăйĕн тупăшусисем вырăнне хурать, ахăртнех. Мĕншĕн тесен почтальон хăйне сунарти тискер кайăк пек тытать: пĕр вырăнта нумайччен тытăнса тăмасть, куçса çÿресе чылай вырăна çитет.



# Тĕлĕнтермĕш чĕрĕп

1. Чĕрĕпсем çĕр çинче 15 миллион çул каялла пурăнма тытăннă.

2. Вăтамран илсен пĕр чĕрĕпĕн вунă пин йĕп. Çав йĕпсем виçĕ çулта пĕрре çĕнелеççĕ, вĕсене ÿсме çулталăка яхăн вăхăт кирлĕ.

3. Чĕрĕпĕн 36 шăл, ватлăх енне вĕсем тăкăнма пултараççĕ.

4. Ытти чĕрчунпа танлаштарсан, чĕрĕпе сăвăс ытларах тапăнать. Курăк çинче чупнă вăхăтра вăл паразитсене пуç турипе пуçтарнă пекех çаклатать. Сăвăсран хăтăлма чĕрĕпе йĕпписем чăрмантараççĕ. Çавăнпа вăл чееленме пăхать – йĕпписем çине чĕлĕм тĕпĕсем тăрăнтарать, çапла майпа паразитсене наркăмăшласа пĕтересшĕн.

5. Чĕрĕпĕн хĕллехи ыйхи 128 куна тăсăлать. Çывăрнă вăхăтра кĕлеткин температури икĕ градуса çити анать, ытти чухне вара вăл 34 градуспа танлашать. Çывăракан чĕрĕпĕн сывлас хăвăртлăхĕ палăрмаллах вăрахланать: минутра нумайран та 8 хутчен кăна сывласа илет вăл, ытти чухне вара – 40-50 хутчен.

Вăраннă чĕрĕп çав тери выçă, апат шыраса кăна темиçе кун ирттерме пултарать.

6. Нумай тĕсĕн хÿри пур. Чăн та, вăл питĕ кĕске – 3 сантиметр çеç, çавăнпа йĕпсем айĕнче курăнмасть те.

7. Тĕрлĕрен тĕсе уйăрать пулин те чĕрĕпĕн куçĕ питĕ япăх курать. Хăлхи вара питĕ çивĕч, сăмси те шăрша аван туять.

8. Хăлхаллă чĕрĕп, ытти тăванĕпе танлаштарсан, хăрушлăх умĕнче çăмхана çавăрнасшăнах мар. Çак тĕс питĕ хăвăрт чупать, тăшманĕсене ăна хăваласа çитме пĕрре те ансат мар. Хăлхаллă чĕрĕпе тăшманĕ пурпĕрех хăваласа çитрĕ пулсан вăл сикет те ăна сисĕмлĕ вырăнтан тирсе илме тăрăшать.

9. Хура çĕлен наркăмăшĕ чĕрĕпшĕн хăрушă мар. Çитменнине, май килсенех чĕрĕп çĕлене тулли кăмăлпах çăтса яма пултарать.

10. Чи вăйлă наркăмăшсем те – сулема, мышьяк, цианлă кали, синил йÿçекĕ тата ытти те – чĕрĕпе хăратаймаççĕ.

11. Чĕрĕп шăшие çимест тени тĕрĕс мар. Вăл ăна хаваспах çăтса ярĕччĕ, анчах хăваласа çитеймест.

12. Ача-пăча кĕнекинче çурăмĕ çине панулми хунă чĕрĕпе час-часах курма пулать. Тĕрĕссипе, çурăм çинчи йĕпписемпе чĕрĕп панулмие те, кăмпана та, ытти пысăк япалана та тиреймест. Çак чĕрчун çимеллине çурăмĕ çинче йăтса çÿрени пирки авалхи Рим историкĕ Плиний Асли сăмах кăларнă. Вăл мĕншĕн çапла шухăшлани паллă мар.

13. Чĕрĕп алла хăвăрт хăнăхать, килти ытти чĕрчунпа та – йытăпа, кушакпа – çăмăллăнах пĕр чĕлхе тупать. Анчах вăйлă таплатса çÿренине пула ăна килте кашниех тытаймасть.

14. Ăшаланă чĕрĕп – чикан халăхĕн йăлана кĕнĕ апат-çимĕçĕ. Сăмах май, Гай Риччин «Шерлок Холмс: Мĕлкесен вăййи» фильм сыпăкĕнче чĕрĕпрен тунă гуляш çинчен асăнни пур.

# Бархан кушакĕн вĕççĕр ачалăхĕ



Бархан кушакĕ шăрăх, типĕ тăрăхсенче кăна пурăнать. Ÿсен-тăрансăр хăйăрлă пушхирте те, нумай тĕмлĕ тата чуллă айлăмра та тĕл пулайăн ăна. Сайра-хутра çак чĕрчуна тăмлă пушхирте тата чуллă çыран хĕррисенче курма пулать. Бархан кушакĕн пурнăçĕ çĕрлехи вăхăтсенче кăна иртет. Пакистан тĕсĕ çеç хĕлле тата çуркуннен пуçламăш тапхăрĕнче каç ĕнтрĕкĕнче те хастар. Кăнтăрлахи шăрăхран вĕсем тилĕ, дикобраз, сăвăр тата ытти чĕрчун йăвисенче пытанаççĕ. Чи кăсăкли вара, Бархан кушакĕ пурнăç тăршшĕпех çура пек курăнать.

# Пахчари «тухтăр»

Сар çип ути /зверобой/ пире чылай чиртен сыхланма тата сывалма пулăшать. Унра усăллă япала нумай. Мĕн авалтанах çак курăк шывĕпе чĕре, ревматизм, шăнса пăсăлни, грипп, пуç ыратни, пĕвер, вар-хырăм тата ытти чирсене сипленĕ. Нумаях пулмасть вара ăсчахсем сар çип утин тепĕр паха енне тĕпчесе пĕлнĕ: вăл япăх кăмăл-туйăмран та пулăшать иккен.

Сар çип ути тытăмĕнче çак япаласем пур:

– токоферол – Е витамин, организма ирĕклĕ радикалсенчен хÿтĕлеме кирлĕ;

– каротин – А витамин умĕн пырать, куçсен ĕçне йĕркелет, ÿт клеткисене çĕнетет, организма вируссемпе бактерисенчен хÿтĕлет;

– сурана инфекцирен тасатма, час тÿрленме пулăшакан япаласем;

– никотин йÿçекĕ, чĕрепе нерв тытăмĕн ĕçне йĕркелет;

– С витамин, иммунитета çирĕплетет, ракпа чирлес хăрушлăхран сыхлать;

– гиперозид тата рутин, юн тымарĕсене çирĕплетет;

– гиперицин тата гиперфорин, депрессирен хăтăлма пулăшать;

– фитонцидсем – ÿсен-тăран антибиотикĕсем, микробсемпе кĕрешеççĕ.

# Юрласа ташлакан кайăк

Хитре юрлакан кайăк сахал мар, ташлаканнисем те пур. Анчах артист пултарулăхĕ енчен пăхсан Австралири лирохвостпа танлашакан çуках. Вăл юрласа ташланине пăхма пуçласан пăрăнса утма хал çитмест.

Лирохвостсем уçланкăра ташлама кăмăллаççĕ. Вĕсене оркестр кирлĕ мар, хăйсемех юрлама ăста. Çитменнине, ахаль кăна юрламаççĕ вĕсем, кашни ташшипе килĕшÿллĕн чĕвĕлтетме пĕлеççĕ. Лирохвост репертуарĕнче пурĕ тăватă ташă.

Кайăка мĕншĕн çапла чĕнеççĕ тетĕр-и? Йăлтах хÿринчи тĕрлĕ тĕслĕ тĕксене пула: вăрăмăшне тата авăнса тăнине кура вĕсем лирăна аса илтереççĕ.






# Сăмахкаçмăшсем



**Сылтăмалла:** 6. Тинĕсри пысăк чĕрчун. 7. Йӳçĕ пахчаçимĕç. 10. Рим хулин никĕçлевçи. 9. Хăйне питĕ чарулла та хытă тытса пурăнакан çын. 8. Н. Мранькан «Ĕмĕр сакки сарлака» ...ĕ. 13. Ĕç укçине малтанах пани. 16. Ӳкессине пĕлсен ... сарма каланă. 17. Чăваш поэчĕ Валентина ... 19. 2015 çулта Хусанта ирттернĕ шыв ...чĕ. 22. Тырă кĕлечĕ. 24. Мăсăльман тĕнĕ. 25. Кĕтмен укçа. 26. Çаврăнăçулăх, майне пĕлни. 27. Çырла йывăçĕ.

**Аялалла:** 1. Сулă. 2. Комсомольски сали малтан Аслă ... ятлă пулнă. 3. Куççуле ĕненмен хула. 4. Пахча йĕри-тавра тытнă ... 5. Çĕр măкăртса тухнă çимĕç. 11. Махинатор ... Бендер. 12. Нумай çиекен ... çын. 14. Вăл ... хресчен çемйинче çуралнă. 15. Вăл пурнăçра нумай ... курнă. 18. Аслă власть органĕ. 20. Чăваш композиторĕ ... Шуçăм. 21. Аркадий Гайдарăн «...па унăн команди» произведенийĕ. 22. Пилĕк ача ...-героиня. 23. Иккĕмĕш Кĕтерин ...



1. Сивĕ апат. 2. Тухтăрăн шурă ...чĕ. 3. Кĕркунне кăнтăралла вĕçсе каякан кайăк. 4. Тухса кайрĕ вăрмана хăрăк ... пуçтарма /«Арçури» поэмăран/. 5. Çын аллипе ... туртма лайăх теççĕ. 6. Хура ... перчетке, ... атă-пушмак. 7. Ялти тантăш-тăвансен тута – ... çуланать /«Нарспи» поэмăран/. 8. Çын ăна çимесĕр пĕр кун та пурăнаймасть. 9. ... пĕрле, телей расна. 10. Лашан тимĕр «пушмакĕ». 11. Куççуль кăларакан пахчаçимĕç. 12. Лармалли хыççăр ... 13. Асамат кĕперĕн пĕр тĕсĕ. 14. Ыратмасăр ... та тухмасть. 15. Шăна – ... 16. «Тухман çын тухсан ... тухать» теççĕ. 17. Ăçта вилĕ, унта ... /ват. сăм./. 18. ... çĕршыв – анне, ют çĕршыв – ама çури амăшĕ /ват. сăм./. 19. ...лă пĕçернĕ çăмарта. 20. Уçланкăри ... шап-шурă çурăлсан /юрăран/. 21. Çĕпĕр пăланĕ. 22. Улăмпа хутăш тунă хĕртмен кирпĕч. 23. Чăваш Республикинчи хула. 24. Нумай та пĕтет, ... та çитет /каларăш/.



**Сылтăмалла:** 7. Чăваш Енри автофургон тăвакансен хули. 8. Кăнтăрти улмаçырла. 9. Утă-улăм пухса кĕртмелли хатĕр. 10. Ватăсене паракан пособи. 11. Çĕпĕрти республика. 14. Талăкра çирĕм тăватă ... 15. Радиолокатор. 16. ... çăкăр – виç кунлăх, усал арăм – ĕмĕрлĕх /каларăш/, 18. Артистăн суя çӳçĕ. 21. Йытта илсе килме хушнă команда. 25. Пасарта лайăх ... çĕрте выртмасть. 26. Пĕррехинче ... пыратпăр вăрманпа. 27. Ачана ашшĕ маччана çитиччен ... тăвать. 28. Ĕлĕк чăвашсем ...е пуç çапнă.

**Аялалла:** 1. ...ине утланса, ача вылять лашалла /«Нарспи» поэмăран/. 2. ... укçа, ... çĕрĕ. 3. Пулма пултарасси, май, мел. 4. Иккĕмĕш Кĕтерин ... 5. Хĕрлĕ çырлаллă йывăç. 6. Наполеонăн çуралнă çĕршывĕ. 12. Тинĕсри типĕ çĕр. 13. Сĕрмен ... йывăр кусать теççĕ. 17. ...нче, юр çинче шăнкăртатса шыв юхать /фольк./. 19. Эпир ĕнтĕ иксĕмĕр ...рен иртрĕмĕр /«Арçури» поэмăран/. 20. Çăпата хуçмалли йывăç форма. 22. Циркри ...-алле. 23. Макарон изделийĕ. 24. ..., купа, капансем ларчĕç улăх варринче /«Нарспи» поэмăран/.



**Сылтăмалла:** 5. Тырăран çăнăх тумалли хуралтă. 7. Хуртан хăраман ача ячĕ. 8. Шумерля /чăвашла/. 9. Кăнтăрти вăрăм хăлхаллă выльăх. 13. Вăл шакла пуçа кирлĕ мар. 15. Апат анни, çиес килни. 16. Актер, юрăç, музыкант. 17. Арена çинчи артист. 19. Наполеон çуралнă çĕршыв. 20. Ĕлĕк-... 22. Мария Ухсайăн «... çилсем» кĕнеки. 26. Те арçури, те ..., те ыр-усал, те вăрхурах /«Арçури» поэмăран/. 27. А.С.Пушкинăн няни ... Родионовна.

**Аялалла:** 1. Чăваш поэчĕ Валентин ... 2. Çывăх мар. 3. Пите сĕрмелли ... 4. Автансăр ял. 6. Кимĕ ишкĕчĕ. 10. Континент. 11. Мускав типографийĕнчен пичетленсе тухнă пĕрремĕш кĕнеке ячĕ. 12. Авалхи кӳме. 14. Купса, сутуçă. 18. Çиçĕм хыççăн авăтакан. 21. Çӳллĕ ... патĕнче вăтă йăмра ешерет /«Нарспи» поэмăран/. 23. Бокс вăййинчи кĕрешӳ вăхăчĕ. 24. Йытă вĕрет, çил вĕрет, ... вĕрет. 25. Çывăрас умĕн ... килет.

*Владислав ПЛАТОНОВ*
(Шупашкар районĕ, Шоркка) *хатĕрленĕ.*

# Ребус

**Пирĕн эрăччен /343-291 çулсенче/ пурăннă авалхи грек поэчĕ, комедиографĕ Менандр каланă çунатлă сăмахсем вуланĕç.**




*Юрий ФРОЛОВ* (Шупашкар) *хатĕрленĕ.*